Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Кадкин Лев Кириллович**

**Книга: Ослиный мост**

# Сказка: Ашак кĕперĕ

1
Земзивер шывне куçланă
Чĕр чунсем киле пуçланă.
Туса лартнă хулине –
Звериград текеннине.

Юхан шывăн тепĕр енĕ
Хир-вăрмансемпе тĕрленнĕ.
Юхнă çăмăл пĕлĕтсем,
Юр юрланă кайăксем.

Çӳреме каçса шыв урлă
Пулнă чĕр чунсен кив сулă.
Шăхăрнă май çил хуллен
Кумнă сăвăр тус куллен.

Сăвăрăн ун хăй екки –
Кăмăл-туйăм тӳлекки.
Ыйха путнă пĕринче...
Пĕтнĕ вăл шыв тĕпĕнче!..

Çавăнтан пурте хăраççĕ,
Земзивер урлă каçмаççĕ.
Юхан шыв пит сарлака,
Лекес марччĕ шарлака.

Çакă мăн юхан шыва,
Çак таса, хитре шыва,
Килсе лекнĕ крокодил,
Курсанах хăть вырт та вил!

Выçăскер хаяр, каварлă,
Куçĕсем сивлек кăварлă!
Хар! карать мăн çăварне:
Лекес марччĕ ун варне!

Çакă кӳршĕрен хăраççĕ,
Пурте чĕтресе тăраççĕ!
Бегемот та – самăркка –
Аякка унран йăрккать...

Хулара вăл пысăк пуçлăх.
Унпала пуласшăн туслă.
Ăна Анăçри манер
Пуç тайсах сумлаççĕ: «Мэр»!

Мэрăн пит нумай ĕç-пуçĕ,

Çавăнпа ун тимлĕ куçĕ
Хыт сыхлатъ пур йĕркене,
Каллĕ-маллĕ вĕркĕнет!

Вăйланса влаçпа тăруçăн,
Вăл крокодилран хăрушă:
Тĕрлĕ шиклĕ чĕр чуна
Кăтартмастъ ыр кун, чăнах!

Пăрăнса унран çӳренĕ,
Шухăша пĕрех сӳренĕ:
Крокодил юнашар чух
Шиксĕр пурăнма май çук!

Пĕр ирпе ак илĕм-тилĕм
Упăти те кашкăр, тилĕ,
Мулкачи – мĕнпур чĕр чун
Пухăннă пăхса ун-кун...

Тытăннă кăшкăрашма,
Мĕкĕрме-макăрашма:
– Канăç çук крокодилран
Пирĕн пур инкек – унран.

Ĕнер пурте шăв-шав илтнĕ:
Крокодил кап! хыпса илнĕ
Жакпа Бил енотсене –
Тек кураймăн вĕсене...

Кĕр-р те кĕр-р туса ырсассăн
Пуçлăха калаç пĕр саслăн:
– Лартнă чух хуçа пулма
Шахвăртрăн кĕпер тума.

Мĕн пирки нушаланатпăр,
Крокодилшăн хур куратпăр?
Шеп сăмах тек кирлĕ мар
Хăвăртрах кĕпер тутар!

Унсăрăн ак кĕпĕр-кепĕр
Тухса кайăпăр кĕç эпĕр,
Хамăрăн Звериграда
Текех таврăнмăпăр та!..

Тăвăла чарасшăн мэрĕ
Хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ.
Унăн ăслă шухăш пур:
«Çиле хирĕç эс ан сур».

Кĕç пурне те тĕлĕнтерчĕ,
Татăклăн çапла пĕлтерчĕ:
«Ыйтăвăр пит ансат мар,
Çĕклĕпĕр кĕпер капмар!».

Ак ĕçне тума пуçларĕç –

Пуш-пушах вĕсен пуç ларĕ!
Проектне тăвасчĕ чух –
Инженерĕсем те çук.

Пĕчĕк ĕç çеç мар пуçарнă –
Кун пирки сăмах та сарнă!
Кирлĕ бут, металл, цемент,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ инструмент.

Хулара та çук пулсассăн
Ăçтан тупăн? Сывлăн ассăн...
Итлесем апла хама,
Тин пуçлап юмахăма.

2

Звериградшăн тăрăшмашкăн,
Хăвăртрах кĕпер тумашкăн
Чĕр чунсем пĕр кун вăш-ваш
Хучĕç суйласа канаш.

Ĕнтĕ хăвăр ăнланатăр,
Пуçлăх тивĕçне чухлатăр:
Мэр вăл хушусем парать,
Явапне канаш тытать.

Мэр тени çапла шутларĕ:
Упана хутпа вăл ярĕ.
Келетки ун пит капмар,
Чунĕпе хăравçă мар.

Хулана яма çав кирлĕ,
Мĕкĕрме пултарĕ вирлĕ.
Хăвăрт пурнăçлĕ ĕçе,
Вăл чухлать ман тивĕçе.

Пилĕк кун та иртрĕ пулĕ –
Çăмăл мар çав хула çулĕ!
Пуç таяççĕ упана...
«Ну, кăтартăр хуçана!..»

Кантура кĕçех вăл тупрĕ,
Хĕпĕртӳллĕн алă çупрĕ.
Йăлтăр-ялтăр таврара,
Юмах мар-и ку, ара?!

Коридорпала вăл куçрĕ,
Алăк хыççăн алăк уçрĕ.
Кашни алак хыçĕнче
Пăхăн пуçлăх куçĕнчен.

Кашни пӳлĕмрех тĕпчеççĕ:
«Сана мĕн-ха кирлĕ?» – теççĕ.
«Кирлĕ çĕн кĕпер!» – тесен
Пĕр хурав: «Плана кĕмен!»

Питĕ тăрăшуллă пулчĕ –
Упа пурпĕр нимсĕр юлчĕ.
Ăнланмарĕç, тен, ăна,
Тен, пĕлмест ăна-кăна...

Чунсăрла унпа хăтланчĕç:
– Кансĕрлен! – тесе шăртланчĕç.
Пĕр усал чĕр чун вара
Калаçмарĕ те вăрах,

Лаплаттарчĕ: « Звериградшăн
Кирлĕ мар кĕпер картмашкăн.
Тупăр ăшăх вырăна,
Каçăр хирĕç çырана!»

Тепĕр кун упа ир кӳлĕм
(Тăп-тулли шăв-шавлă пӳлĕм!)
Канаша хурав парать,
Чĕтресе кăна ларать.

Бегемот çилленчĕ кайрĕ:
– Мĕн чул вăхăт сая кайрĕ!
Эс пăтратнă алăка!
Тупман кирлĕ пуçлăха!

Уссăр сулланса çӳрерĕн,
Утаман мучи, йӳтерĕн!
Халь яратпăр кашкăра,
Унăн кăмăлĕ кăра.

Кирлине вăл тупса килĕ,
Килсенех награда илĕ.
Парăп хам тивĕçлине
Çĕклĕп эпĕ ун чинне.

3

Кашкăр хăвăрт чăм пуçтарчĕ,
Хулана тухса чуптарчĕ.
Хуйхăрма ун çук сăлтав,
Таврăнсассăн пулĕ тав!

Хулана вăл çитрĕ хăвăрт,
Кантура кĕç кĕчĕ йăпăрт.
Хут тавраш кăтартса
Пачĕ ĕç пирки картса.

– Земзивер юхан шыв урлă
Кĕпер кирлĕ – унсăр хурлăх!
Пуçлăхăн сăмах сахал:
– Тупма çук материал!

– Епле çук?! –
хăрлатрĕ кашкăр.
Туйрĕ: кĕç çиет муклашкă.

Алăкра хуралти пек
Йытăсем кĕтĕвĕпех!

Пур бульдог, сунар йытти,
Дог ятли тата ытти...
Харлатать ав бультерьер,
Тапăнасшан фокстерьер.

Урмăшса тăрать йыт йышĕ,
Кирек кам чĕри те йăшĕ.
«Фас!» тессе кĕт ўкĕтет,
Самантрах тире сĕвет!

Айван мар-ха сăрă кашкăр,
Хўри пурпĕр выртрĕ лаштăр!
Килĕшрĕ вăл хуравпа,
Сăпайланчĕ куравпа.

«Ятăм ман пулсан та кашкăр,
Кăмăлăм, эс халь ан чашкăр!
Туртса çурччĕр-и лăр-лар?!
Нимле чин та кирлĕ мар!..»

4

Кашкăра хыт айăпларĕç,
Канашра вăрах ятларĕç.
Бегемот ир еннелле
Чĕнчĕ хăй патне тилле.

Ун чеелĕхне пĕл ўçĕн,
Хăйĕн ĕмĕтне тĕлл ўçĕн
Шахвăртса та илĕртсе
Бегемот пуплет хĕртсе:

− Эсĕ питĕ паллă теççĕ,
Арăсланшăн та тус теççĕ.
Ăнкаруллă та вăр-вар,
Пит хăюллă та хастар.

Савăнма та юрататăн,
Юрлама та пултаратăн.
Çĕклеме чун хăватне
Эс çўрен автан патне.

Тепĕртак хавхаланмашкăн
Сĕнĕп хулана каймашкăн.
Стройка ĕçĕнче самай
Пулăшăн эс çула май.

Эп сана аван пĕлетĕп,
Ырă çул чунтан пиллетĕп.
Эсĕ чи пултарулли,
Пурнăçлăн ĕçе туллин.

Хĕпĕртерĕ чее тилĕ:
Бегемотăн тутлă пилĕ.
Йышăнчĕ вăл сĕнĕве –
Тек кĕтмерĕ чĕнĕве.

Капăр кĕрĕкне вăл уртрĕ
Хулана кĕç тухса юртрĕ.
Хӳрине вĕл-вĕл суллать,
Ĕмĕтне пыллать-çулать.

Хулара хӳреллĕ тилĕ
Лавĕпех-иç! Выртăн вилĕн!
Ют тилле хумаç шута,
Кăлăхах йăрккать-утать.

Куллине чĕлтĕртеттерчĕ,
Хӳрине вĕлтĕртеттерчĕ,
Йăпăл-йăпăл çеç сасси –
Пурпĕр туйăнмасть усси.

Хирĕлсе унпа пуплерĕç,
Куçранах кулса йĕплерĕç:
«Кĕпер ыйтавне татма
Кирлĕ мар куç вылятма».

Шанăça вăл кĕреймерĕ,
Пуçлăха пыл сĕреймерĕ.
Сикрĕ ахалех йăлт-ялт –
Алăк хупăнчĕ шăлт-шалт!

Тилĕ килелле васкарĕ.
Пухăнсассăн канаш çарĕ
Тытрĕ вăл хăйне сăпай,
Сăмахларĕ пит самай:

– Кантурта эп пултăм, – терĕ, –
Питĕ тăрăшрăм-çке, – терĕ. –
Анчах чурăс хулара
Ĕç тухмарĕ-çке, ара...

Кун пек чух пулаймăн лăпкă,
Бабуинĕ-бандерлогĕ
Пăхкалать ав тунăн суд,
Мĕн-ши калĕ бегемот?

Кам çине вăл халь кăтартĕ?
Камăн шăпине вăл картĕ?
Кĕпер ĕçĕ ансат мар,
Чăрт сурса хумалăх мар.

Хывăнмасть кĕпер шыв урлă.
Бегемотшăн пысăк хурлăх:
Тытмасассăн сăмаха
Туртса çурĕç пуçлăха.

Чăрсăр та чее макака, –

Тем ăспа палкать-ха çакă, –
Хăлхинчен бегемота
Тăрăшсах пăшăлтатать:

«Инкеке сан лекес марччĕ,
Ашака хутпа ярсамччĕ!
Ĕç тухмарĕ тĕк шаках
Айăплатпăр ашака.

Хулана, ан тив, вăл чуптăр,
Нимĕн те унта ан туптăр.
Ма тесессĕн вăл – ашак,
Киле килĕ пуш-пушах.

Канаша пĕлтерĕн эсĕ:
– Пулчĕ-çке ашак хевтесĕр.
Çакăн пек кала тесе
Янăччĕ эп вĕрентсе.

Ашака эп кăлăх шаннă,
Унăн ĕçĕсем путланнă.
Стройкăна валли ăнман
Хăйăрпа цемент тупман.

Хушнине пурнăçлаймасăр
Инкек кӳчĕ вăл пит майсăр.
Айăпли кунта ашак –
Шаккăр пуçĕнчен шак-шак!

Чухламасть ашак нимскер те,
Ăна лектĕр пур синкерĕ!
Усă кур ху влаçупа,
Кукăль çи пуçса çупа!».

5

Ашака кайса вăратрĕç,
Хулана ăна ăсатрĕç.
Пуçлăхшăн ку пит аван:
Айăплантăрах айван.

Хулана ашак ак килчĕ,
Пысăк шухăш пуçа илчĕ:
Ăçталла ун каймалла,
Кампала калаçмалла?

Шыраса халтан вăл супрĕ,
Пурпĕр кирлĕ алăк тупрĕ.
Кантурта кумать чĕр чун,
Чупкалать кăна ун-кун.

Алăксем патне вăл пычĕ,
Пуçĕнче ун шухăш пулчĕ:
«Чим-ха, хăшĕнчен кĕрер,
Кам тăвать кунта кĕпер?»

Пуç ватма ыйту нумай ун,
Çаврăнса çӳренĕ майăн
Çапăнатчĕ вăл чутах
Ашакпа çамкаранах!

Пĕр-пĕрин çине пăхсассăн
Уйрăласшăнччĕ пĕр сассăр.
Иккĕш те пĕр самантрах
Пулчĕç шăп пĕр шухăшпах:

«Тен, тахçан тĕл пулнă мар-и?
Пĕр-пĕрне паллатпăр мар-и?
Пысăк мăкăль çамкара!
Тăвансем-çке-ха, ара!»

Ыталанчĕç пит хаваллăн,
Пиччĕшпеле шăллĕ калăн.
− Эсĕ-çке ку, Ашака?
− Тĕрĕсех çав, Машака!

Кăмăллăн тĕл пулнă хыççăн
Сăмахларĕç вĕсем уççăн.
Ыйтрĕ ашакран ашак:
− Хулара мĕн-ма эс çак?

− Туссене курас-ха терĕм,
Хамăн ĕç çинчен пĕлтерĕп,
Кам чухлать ашак ĕçне
Ашак тусĕсĕр пуçне?

Алăкне ашак кĕç уçрĕ,
Хăнипе пĕрле вăл куçрĕ
Хайĕн чаплă пӳлĕмне,
Вутлантарчĕ чун хĕмне.

Пӳлĕмре ашак пăлханчĕ:
Ал-ури ун йăлт чăлханчĕ.
Сĕтелсем − ретрен рете,
Ашак йышĕ черетпе.

Шут шутлаççĕ − тĕв тăваççĕ,
Цифрăсем танлаштараççĕ.
Сас тăрать: иа-иа!
Ĕçлĕ çав тери, ийя.

Вăй-хăват пухса хастаррăн
«Иа!» кăшкăрчĕ вăл аррăн.
Акă пӳлĕм шăпланать:
Асăрхарĕç хăнана.

Савăнсах эп пĕлтеретĕп:
Сиксе тăчĕç ретĕн-ретĕн
Ашаксем хĕпĕртесе,
Хамăрăн тăван тесе.

Сырса илчĕç, хупăрларĕç,
Ыталарĕç, çупăрларĕç.
Хăналарĕç сĕлĕпе,
Сăй сăйларĕç кĕлĕпе.

Шанчăка кĕрсен пĕлтерчĕ:
«Чĕр чунсен пит пысăк терчĕ −
Земзивер çыранĕнче
Çук кĕпер паян кунччен.

Крокодил шывра хаяррăн
Çăварне хапха пек карнă.
Хыпса çăтнă халь анчах
Икĕ енота тăнчах!

Пысăк хурлăхра хуламăр −
Ним тума пĕлместпĕр хамăр.
Элчĕ турĕç те мана
Ячĕç çакă хулана

Сирĕнпе канашламашкăн,
Кĕпер ыйтăвне татмашкăн...»
Хыт тимлерĕç ашаксем,
Пулчĕç пулăшма вĕсем:

«Ку ыйту вăл пирĕн мар-ха...
Пурпĕрех кĕпер тăвар-ха».
Ыйтрĕ ашакран ашак:
«Качака кĕрсен хушша?..»

«Унăн кантурне кĕместпĕр, −
Тет тепри, −
ăна хĕртместпĕр.
Пирĕн совесть тап-таса.
Парăпăр кĕпер туса.

Йăлт шутлатпăр, тĕрĕслетпĕр,
Земзивер çулне виçетпĕр.
Вĕçлĕпĕр ĕç вăхăтра,
Пурăнар вара хăтра.

Ĕç-пуçа часрах тумашкăн
Хăв та тăрăш пулăшмашкăн.
Кĕпере епле тăвар?
Тăрăх? Урлă? Сĕнӳ пар!».

Хай ашак хушса каларĕ:
− Çырма тăрăх чаплăн ларĕ!
Шĕвĕр шăллă крокодил
Ун çинче тăваймĕ кил.

− Хак пирки халь пуплеместпĕр!
Пурнăç хаклĕ − кам пĕлмест-тĕр?
Мĕн шутлатăн, Ашака?
− Питĕ тĕрĕс, Машака!

Калаçса йӑлт татӑлсассӑн,
Килӗш ӳсене тусассӑн
Тытӑнчӗç проект ӗçне:
– Хӑвӑртрах курас вӗçне!

Яра кунӑн, каçлӑн-ирлӗн
Çырчӗç те ӳкерчӗç вирлӗн:
Хут çинче – мӑнаç кӗпер
Шыва тӑрӑх чип-чипер!

Кӗпер тӑршшӗ – вӑтӑр çухрӑм!
Проектне вулаççӗ туххӑм.
Чупрӗçӗ жираф патне,
Ларттар терӗç пичетне.

6

Поездсем васкаççӗ ӗнтӗ,
Турттармашкӑн кантур сӗнчӗ
Кирпӗч, хӑйӑр та цемент,
Тӗрлӗ-тӗрлӗ инструмент.

Хутнӑ кӑмакари евӗр
Çыранра – ӗçлев кӗрлевӗ.
Крокодил кӗтмен куна –
Тарнӑ вӑшт Африкӑна.

Пурпӗр савӑнса пулмарӗ,
Мэрӑн кӑмӑлӗ тулмарӗ.
Шыва май çӗклемӗ мэр
Вӑтӑр çухрӑмлӑ кӗпер.

Урчӗ, çухӑрчӗ хаяррӑн,
Пухрӗ канаша вӑр-варрӑн.
Ашака унта чӗнет,
Сӑмахпа ӑна хӗнет:

– Ытлашши тимлерӗн эсӗ,
Юсрӗ Звериград кӗтесӗ!
Вараларӑн çырана.
Мӗн калам тус-тӑвана?..

Васкаса приказ вӑл çырчӗ
Ашака ӗçрен кӗç пӑрчӗ.
Кайрӗ леш çынсем патне,
Манчӗ Звериград ятне.

Пурӑнать халь хурланусӑр,
Çынсене кӗрет вӑл усӑ.
Çӗклесе çӳрет тавар
Тӑрӑшуллӑ янавар.

Кӗрессе ята мэр туйрӗ,
Пухура пурне те суйрӗ,
Айӑпларӗ ашака –

Çăлăнчĕ хăй вăш-вашах.

Халĕ те-ха астăваççĕ
Чĕр чунсем – халап калаççĕ
Земзивер тăрăх ашак
Хывнине кĕпер-каçак.

Халĕ те çав кĕпере
Тăваймаççĕ тет пĕрех...

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.